# Килсе курăр чăваш тĕррине

«Чăваш Ен – çĕр пин тĕрĕ çĕршывĕ», –
Ахальтен каламан ĕлĕкрен.
Тĕрĕре палăрать çулсен йĕрĕ,
Çутă ĕмĕчĕ мĕн ĕмĕртен
Чăваш халăхĕн тĕрĕ-эрешĕ
Тыткăнлать-çке асамлăхĕпе.
Авалтан тумтире илемлетнĕ:
Кĕпине, сурпанне, шупăрне.
Ак тытатăп алла эпĕ тĕрĕ:
«Мĕн кăна палăрмасть-ши кунта?»-
Çут çанталăкĕ, çĕрĕ, хĕвелĕ,
Вĕçен кайăкĕ те пур унта.
Пит илемлĕ те хÿхĕм тĕрленĕ,
Курăнмасть тĕррĕн вĕçĕ-хĕрри.
Эп туятăп, пулнах пултаруллă
Ырă кăмăллă тĕрĕ ăсти.
Паянччен эрешлет манăн халăх:
Кĕпине, саппунне, алсине.
Иксĕлмест халăхра çак ăсталăх,
Килсе курăр чăваш тĕррине!

**26.11.2020.**

**Степанова Галина Федоровна,**
**Тăвай районĕнчи Енĕш-Нăрваш шкулĕнче**
**чăваш чĕлхипе литературине вĕрентекен**